26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
19
ВЫРСАРНИКУН
187(6424) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Всевобуч боецĕсене, командирĕсене, политика тĕлĕшпе ĕçлекен тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентмелле туни икĕ çул тултарнă май, Хĕрлĕ Çар валли резервсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçре Чăваш АССР всевобучĕн уйрăмах палăрнă çак боецĕсене, командирĕсене, политика тĕлĕшпе ĕçлекен тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Алексей Петрович **Арсеньева** — лейтенанта, Йĕпреç райвоенкомачĕн всевобуч тĕлĕшпе ĕçлекен старши инструкторне.

2. Юрий Иванович **Бурашникова** — ВЛКСМ Етĕрне райкомĕн секретарьне.

3. Иван Степанович **Васильева** — Елчĕкри çар ĕçне вĕрентмелли пунктăн начальникĕн политика тĕлĕшпе ĕçлекен заместительне.

4. Петр Васильевич **Головченкона** — старши лейтенанта, Шупашкар горвоенкомачĕн всевобуч инструкторне.

5. Константин Ефимович **Гордеева** — старши политрука, Улатăр горвоенкомачĕ çумĕнчи хĕрсен-морзисткăсен вĕренÿ пункчĕн командирĕн политика тĕлĕшпе ĕçлекен заместительне.

6. Георгий Георгиевич **Залазинскне** — запасри кĕçĕн лейтенанта, Улатăр горвоенкомачĕ çумĕнчи хĕрсен-морзисткăсен спецподразделени ротин командирне.

7. Павел Иванович **Иванова** — ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн инструкторне.

8. Максим Пименович **Казакова** — Елчĕкри çар ĕçне вĕрентмелли пунктăн начальникне.

9. Никонор Николаевич **Краснова** — ВКП(б) Шупашкар горкомĕн çарĕç отделĕн инструкторне.

10. Алексей Алексеевич **Кудашева** — ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн çарĕç отделĕн заведующине.

11. Таисия Григорьевна **Кузьминăна** — Шупашкар горвоенкомачĕн всевобуч спецподразделенийĕн боецне.

12. Константин Иванович **Кутаркина** — лейтенанта, Комсомольски райвоенкоматăн всевобуч тĕлĕшпе ĕçлекен старши инструкторне.

13. Степан Данилович **Лавриновича** — майора, Чăваш АССР Çар Комиссариачĕн всевобуч отделĕн старши инструкторне.

14. Петр Илларионович **Ларионова** — Çĕмĕрлери комсомолецсемпе çамрăксен вĕренÿ пункчĕн начальникĕн политика тĕлĕшпе ĕçлекен заместительне.

15. Вера Дмитриевна **Латышевăна** — Шупашкар горвоенкомачĕн всевобуч спецподразделенийĕнчи боеца.

16. Георгий Демьянович **Лусникова** — старши лейтенанта, Вăрнар райвоенкомачĕн всевобуч тĕлĕшпе ĕçлекен старши инструкторне.

17. Михаил Ермолаевич **Матюхина** — запасри взвод командирĕн помощникне, Тĕнсĕр вĕренÿ пункчĕн начальникне.

18. Василий Иванович **Мосякина** — лейтенанта, Ишлей райвоенкомачĕн всевобуч тĕлĕшпе ĕçлекен старши инструкторне.

19. Вера Николаевна **Никишовăна** — Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председательне.

20. Дмитрий Иванович **Останина** — Етĕрне райвоенкомачĕн всевобуч тĕлĕшпе ĕçлекен старши инструкторне.

21. Георгий Ильич **Петрухина** — ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарьне.

22. Алексей Данилович **Поздняковича** — лейтенанта, Шупашкар райвоенкомачĕн всевобуч тĕлĕшпе ĕçлекен старши инструкторне.

23. Елена Поликарповна **Поликарповăна** — Тĕнсĕр вĕренÿ пункчĕн начальникĕн политика тĕлĕшпе ĕçлекен заместительне.

24. Михаил Яковлевич **Саначина** — запасри вăтам командира, Шупашкарти çар ĕçне вĕрентмелли пунктăн начальникне.

25. Екатерина Владимировна **Старостинăна** — ВЛКСМ Çĕмĕрле райкомĕн секретарьне.

26. Алексей Николаевич **Студенецкие** — Шупашкарти çар ĕçне вĕрентмелли пунктăн начальникĕн политика тĕлĕшпе ĕçлекен заместительне.

27. Георгий Павлович **Суворова** — запасри старши сержанта, Çĕмĕрлери станковăй пулеметчиксен спецподразделенийĕн вĕренÿ пункчĕн начальникне.

28. Юрий Николаевич **Тютикова** — Шупашкар горвоенкомачĕн ручной пулеметчиксен спецподразделенийĕнчи боеца.

29. Леонид Васильевич **Федина** — майора, Чăваш АССР Çар Комиссариачĕн всевобуч отделĕн начальникне.

30. Михаил Иванович **Шипунова** — Шупашкар горвоенкомачĕн всевобуч спецподразделенийĕн командирне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕ.

Подсобнăй хуçалăхсенчи, кашнин хăйĕн тата коллективсен пахчисенчи пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртсе сыхласа усрасси çинчен

ВЦСПС секретариачĕ профсоюзсен центрти, облаçсенчи тата фабрикăсемпе заводсенчи комитечĕсене сентябрьпе октябрьте подсобнăй хуçалăхсенчи, рабочисемпе служащисен кашнин хăйĕн тата коллективсен пахчисенчи çимĕçсене пуçтарса кĕртес тата вĕсене сыхласа усрас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхма хушнă. Çавăнпа пĕрлех тата выльăх-чĕрлĕх валли хĕллехи çуртсем тума тата выльăх апачĕ хатĕрлесе хума хушнă.

Сентябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа подсобнăй хуçалăхсен пахча-çимĕçĕсене пуçтарса кĕртме тата вĕсене сыхласа усрас ĕçе организацилеме пулăшмалли уйăхлăх туса ирттермелле. Пахча-çимĕçсене палăртнă сроксенче тата пĕр çухатусăр пуçтарса кĕртмелле, пахча-çимĕçсем усрамалли вырăнсем тата купăста йÿçĕтмелли хатĕрсем пуррине халех тĕрĕслесе тухмалла.

Пахча комиссийĕсен кашни çыннăн хăйĕн тата коллективсен пахчисенчи пахча-çимĕçсене вăхăтĕнче пухса кĕртнине тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсене сыхласа усрама вăхăтра вырăнаçтарса хунине кулленех тĕрĕслесе тăмалла. (ТАСС).

Комсомол 25 çул тултарнă уява хатĕрленетпĕр

Октябрĕн 29-мĕшĕнче Ленинла—Сталинла комсомол 25 çул тултарать.

Пирĕн заводри комсомолецсем, çак чаплă уява производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илес тесе, сталинла вахтăна тăчĕç. Комсомолка Полина Чернецкая сменинче ĕçлекен рабочисем август уйăхĕнче нормăна 260 процент тултарчĕç. Сменăри комсомол группин организаторĕ Клавдия Коновалова юлташ ĕçре пример кăтартса пырать, вăл нормăна 499 процент тултарчĕ. Комсомол группин организаторĕ пулса ĕçлекен Люса Чернецкая сменнчи мастер Валя Голубева тата Спивака юлташсем нормăна 125—172 процент тултараççĕ. Çавăн пекех пур цехсенче ĕçлекен комсомолецсем те хăйсен нормисене ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Панфилов комсомолец уйăхсерен 5-шер норма тултарать. Мария тата Елизавета Филипповăсем, çамрăк комсомолка Романовская юлташсем те лайăх ĕçлеççĕ.

З. БРОДОЦКАЯ,
Н-ски заводри ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ.

Оборона Халăх Комиссариатĕнчен

1943 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕнче Гадяч хули районĕнче боевой постра Хĕрлĕ Çарăн шанчăклă командирĕ—Павел Петрович **Корзун** генерал-лейтенант вилнĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Корзун юлташа ĕмĕр-ĕмĕрех асăнмалла тăвас тесе, Гадяч хулинче унăн памятникне лартаççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче БРЯНСК фронтĕнчи çарсем Десна шывĕ урлă ăнăçлăн каçнă та, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, БРЯНСК тата БЕЖИЦА хулисене тытса илнĕ.

Пирĕн АЗОВ тинĕс хĕррипе малалла тапăнса пыракан çарсем ОСИПЕНКО (Бердянск) хулипе портне тытса илнĕ.

ЗАПОРОЖЬЕ тата МЕЛИТОПОЛЬ енĕсенче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ГРИГОРЬЕВКА, РОЖДЕСТВЕНСКОЕ, ВОЗДВИЖЕНКА, ТУРИ ТОКМАК, АЛЕКСЕЕВКА, НОВО-ТРОИЦКОЕ, НОВО-ВАСИЛЬЕВСК, ЛУНОЧАРСКОЕ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата МЕЧЕТНАЯ, ГАЙЧУР, БЕЛЬМАНКА ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ПАВЛОГРАД енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 15 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Çав шутра ÇĔНĔ ПАРАФИЕВКА, ВОРОШИЛОВКА, ЛИГОВКА, ЖЕМЧУЖНОЕ, АРТЕЛЬНОЕ, ФЕДОРОВКА, ЛУКАШЕВКА, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, КОНДРАТОВКА, ÇĔНĔ ДАЧА, ТЕРНОВКА, БОГДАНОВКА, ДМИТРИЕВКА, ВАСИЛЬКОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата СТРАСТНОЙ, ОРЕЛЬКИ, САМОЙЛОВКА ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ПОЛТАВА тата КРАСНОГРАД енĕсенче пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 8 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Çав шутра Харьков облаçĕнчи КЕГИЧЕВКА ятлă район центрне тата ПОКРОВКА, СНЕЖКОВ КУТ, АЛЕКСАНДРОВКА, КĔÇĔН ГУБЩИНА, КАМЫШЕВАТОЕ, ЗЕМЕНОВКА, КИРИЛЛОВКА, БЕРЕСТОВЕНЬКА, ЦИГЛЕРОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан 130 пункта ытла тытса илнĕ. Çав шутра Чернигов облаçĕнчи ЛОСИНОВКА ятлă район центрне, Полтава облаçĕнчи ЧЕРНУХИ ятлă район центрне, ЛИХАЧЕВО, МРИН, МОНАСТЫРИЩЕ, ЗАУДАЙКА, ЯРОШОВКА, СИЛЬЧЕНКОВО, КАРПИЛОВКА, САВИНЦЫ, ДАЩЕНИ, БЕЛОЦЕРКОВЦЫ, ЯЦЫНЫ, ЖДАНЫ, ТИШКИ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

БРЯНСК хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем ăнăçлăн çапăçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

РОСЛАВЛЬ енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пырса çапăçнă, уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 6 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ.

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 32 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Брянск фронтĕнчи çарсем паян, тапăклăн пырса çапса, тăшман хирĕç тăнине сирсе янă та промышленноçлă пысăк хуласене—Брянск тата Бежица хулисене тытса илнĕ. Брянскран хĕвелтухăçнерехре кĕрешнĕ пирĕн соединенисем сентябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, артиллерипе миномётсенчен персе тăрса пулăшнипе, Десна шывĕ урлă темиçе тĕлтен каçнă. Десна шывĕн хĕвеланăç енчи чăнкă та çÿллĕ хĕррине, нимĕçсем вăйлă тĕреклетнĕ хĕррине, каçас задачăна пирĕн çарсем ăнăçлăн пурнăçланă. Совет боецĕсем хулана вăркăнса кĕрсе кайнă та урамсенче çапăçма пуçланă. Çав вăхăтрах пирĕн çурçĕр енчен тапăнса пыракан чаçсем Бежица хулипе хÿтĕлекен тăшмана пырса çапнă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн Брянскпа Бежица хулисене нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Çав çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсен 95-мĕш, 110-мĕш, 134-мĕш, 299-мĕш, 339-мĕш тата 707-мĕш пехотнăй дивизийĕсене аркатса тăкнă. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсене халь шута илеççĕ.

* * *

Азов тинĕс хĕрринче пирĕн çарсем Осипенко (Бердянск) хулипе портне тытса илнĕ.

Запорожье тата Мелитополь енĕсенче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тата темиçе чугун çул станцине тытса илнĕ. Халăх пурăнакан тĕреклетнĕ пунктсемпе усă курса, нимĕçсем контратакăсем тунă, малалла тапăнса пыракан совет çарĕсене тытса чарма хăтланнă. Пирĕн боецсем тăшманăн контратакисене сирсе янă, ăна çĕнĕрен хĕвеланăçнелле хăваласа янă. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 4 танкне тата 18 туппине пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра тăшманăн пысăк автоколоннине аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Павлоград енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Пĕр гвардейски чаçăн боецĕсем айккипе кайса çавăрăнна та тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕннисем 10 тупă (вĕсенчен виççĕшĕ хăй тĕллĕн çÿрекен «Фердинанд» йышшисем), 26 миномет, 60 пулемет, 40 автомашина тата боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ. Меллĕ рубежсенче тытăнса тăрас тесе, нимĕçсем пирĕн çарсене хаяррăн атакăлаççĕ. Анчах та гитлеровецсем пĕр-пĕр рубежра тытăнса тăма хăтланни пăчланса ларать.

Пирĕн танкистсем, пехотинецсем тата артиллеристсем пыра-пыра çаппипе тăшман пĕр позици хыççăн тепĕрне пăрахса хăварать, çынсем тĕлĕшпе те, техника енĕпе те пысăк çухатусем тÿсет

* * *

Полтавăпа Красноград енĕсенче пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, Харьков облаçĕнчи Кегичевка ятлă район центрне тата халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединенин боецĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, унтан хăйсем хирĕç пырса çапнă та гитлеровецсене каялла çавăрса янă, вĕсене 12 километр аяккалла хăваласа янă. Çав çапăçура нимĕç пехотине икĕ батальон таран вĕлерсе пĕтернĕ, 6 танк персе çĕмĕрнĕ, 15 тупă тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăн темиçе подразделенине аркатса тăкнă, 60 çынна ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Киев енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 130 пункта ытла, çав шутра Чернигов облаçĕнчи Лосиновка ятлă район центрне тата Полтава облаçĕнчи Чернухи ятлă район центрне, тытса илнĕ. Пĕр соединенин чаçĕсем, нимĕçсене хĕвеланăçнелле тата кăнтăрхĕвеланăçнелле хăваласа пырса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 24 орудия, 128 пулемет, 23 миномет, боеприпассен 2 складне, горючи тата сĕрмелли материалсем хунă склада тата тырă, çăнăх, выльăх апачĕ нумай тытса илнĕ. Пĕр чугун çул станцийĕнче 53 паровоз тата вагонсем нумай тытса илнĕ. Пирĕн çарсем Ромны хулине тытса илнĕ хыççăн малалла тапăнса пынă. Пĕр танковăй часть халăх пурăнакан пĕр пункта вăркăнса кĕрсе кайнă та 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, 100 çынна ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Пирĕн Новгород-Северский хулине тытса илнĕ çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 16 тупă тата боеприпассен 3 складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, 5 танк пĕтерсе тăкнă. Нимĕç автоматчикĕсене пĕр рота ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Финн заливĕнче тăшманăн 3000 тонна водоизмещениллĕ транспортне шыва путарнă.

* * *

Нимĕçсен Витебск облаçĕнчи çар влаçĕсем хресченсенчен çĕнĕ тырра туртса илме ялсене уйрăм командăсем янă. Партизансем фашистла çаратуçăсемпе хаяррăн çапăçма пуçланă. Партизансен пĕр отрячĕ икĕ кун хушшинче 56 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 70 ытла гитлеровеца йывăр амантнă. 6 автомашинăна тата пĕр танкеткăна пĕтерсе тăкнă. Витебск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ тăшманăн пысăк подразделенине аркатса тăкнă. Нимĕçсен 200 çын ытла вилнĕ е аманнă, вĕсем вара пĕр йĕркесĕр каялла чакнă.

Предприятисемпе колхозсенчи хĕрÿ ĕçре фронтовиксемпе танлашар!

Халăх савăнăçĕ

Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерÿсемпе совет çыннисем тивĕçлипе савăнаççĕ. Вăл кулленхи ĕçре уççăн палăрса тăрать. Кашни кун предприятисемпе колхозсенче, промартельсенче çĕнĕ çитĕнÿсем туни çинчен çĕнĕ хыпарсем килсе тăраççĕ.

Канаш хулинчи предприятисемпе промартельсен коллективĕсем нумайĕшĕсем августри производство планне ирттерсе тултарнă. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем август уйăхĕн планне тултарнă хыççăн, сентябрьте пĕтĕм продукци кăлармалли плана 8 процент ирттерсе пурнăçлама, ĕç тухăçлăхне 8 процент ÿстерме, хĕллене тĕплĕн хатĕрленсе çитме, завода тин кăна пынă рабочисене 100 çынна ĕçе вĕрентме, ĕç нормине пĕтĕм завочĕпе илсен 200 процентран кая мар тултарма палăртнă. Заводри кашни рабочи çав обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешет. Нумайĕшĕсем Хĕрлĕ Çар çĕнĕ çĕнтерÿсем тунă ятпа стахановла вахтăна тăраççĕ. Çапла Гаврилов юлташ бригади стахановла вахтăна тăрса нормăна 460 процент тултарнă. Бригада, тунă ÿсĕме çирĕплетсе, Октябрь уявĕ тĕлне çĕнĕ çитĕнÿ тума пулать. Чернов юлташ механически цехра ĕçлеме пуçланăранпа икĕ уйăх та çитмен-ха. Вăл пĕр уйăх хушшинче токарь ĕçне вĕренсе çитнĕ, халĕ икĕ норма тултарса пырать.

Республикăри чылай предприятисемпе промартельсен коллективĕсем çулталăкри плансене срокчен тултараççĕ. Шупашкарти махорка фабрики çулталăк планне сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртнĕ. Çулталăк планне срокчен тултарнă промартельсем вуншарăн шутланаççĕ.

Пулă тытакан колхозсемпе бригадăсем уйăхсерен планран ирттерсе пулă параççĕ. Çапла август уйăхĕнче рыбтрест хуçалăхĕсем планран ирттерсе 3 тонна пулă тытса панă. Уйрăмăнах Пăрачкаври, Етĕрнери, Сĕнтĕрвăрринчи колхозсем лайăх ĕçлеççĕ.

Пахча-çимĕçсем хатĕрлекен конторăсем хаяр, купăста тăварласа йÿçĕтмелли çулталăкри плана пурнăçланă.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿсем тунипе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи обязательствăсене тултараççĕ, укçа-тенкĕ парăмне çийĕнчех тÿлесе татаççĕ.

Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те социализмлă ăмăрту саралса пырать. Ăмăрту тĕллевĕ — фронта ытларах пулăшу парасси.

Çĕнĕ çĕнтерÿ ячĕпе

ВАРМАР, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри ĕççыннисем, пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар кулленхи çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе хавхаланса, фронта пулăшассине вăйлатаççĕ. Ĕнер Сталин юлташ Новороссийск хулине нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ятпа панă приказа кашни ĕççыннийĕ пысăк тимлĕхпе итлерĕ.

Паян ирех çак чаплă çĕнтерÿ ячĕпе колхозсенчен темиçе вуншар хĕрлĕ обозсем хатĕрлев пунктне тырă па çитрĕç. «Заря», «Свобода», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем государствăна тырă памалли плана ытлашшипех тултарчĕç. «Свобода» колхоз 1944 çулшăн 60 центнер пачĕ.

Колхозсенче авăн çапас ĕç пысăк хĕрÿлĕхпе пырать. «Париж Коммуни», «Атнаш» колхозсем авăн çапас ĕçе пĕтĕмпех вĕçлерĕç. «Путь Ленина» колхоз (председателĕ А. Кузмин юлташ), кая юлса пыраканскер, халĕ пур ĕçе те лайăхлатса пырать. Уйран кĕлтесем турттарса пĕтернĕ. Паян-ыран авăн çапса пĕтереççĕ.

А. СМИРНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Тырра та çĕнĕрен те çĕнĕ ÿсĕмсем туса пырар

Колхоз уйри тырпулсене пысăк пахалăхпа пухса кĕртрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çине ĕçпе ответлеççĕ. 3-мĕш бригада (бригадирĕ И. Егоров юлташ) пур ĕçре те малта пырать. К. Сухарева, А. Зиновьева колхозницăсем авăн çапнă çĕрте ĕç нормине икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарса пыраççĕ. 63 çула çитнĕ колхозник Ф. Егоров юлташ колхозра пĕр ĕçрен юлмасăр ĕçлет. 2-мĕш бригадăри К. Степанова, М. Романова И. Павлова колхозницăсем те колхозăн пур ĕçĕнче те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Пирĕн кăçал пахча-çимĕç культурисем те ăнса пулчĕç. Государствăна памалли плана ытлашшипех тултарнă. Çак кунсенче 60 центнер купăста, 8 центнер кишĕр леçсе парăмăр. Паянхи куна пахча-çимĕç сутса 128 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр.

А. ГАВРИЛОВ
Канаш районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Фронтри çĕнтерÿсемпе хавхаланса

КАЛИНИНО, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Хĕрлĕ Çар кашни кун пысăкран та пысăк çĕнтерÿсем туни çине районри колхозсем ĕçпе ответлеççĕ. «Новый путь» колхоз государство умĕнчи пур парăмсене те срокчен парса татрĕ. 416 центнер тырă пачĕ. Пахча-çимĕç культурисене те ытлашшипех парса татрĕ. Ку ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пыма кунта транспорт бригади организациленĕ. Измайловпа Антонова юлташсем çак ĕçре питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ.

Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ.

В. ЗАЙЦЕВ.

Александр Сергеевич Щербакова генерал-полковник званине парасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Александр Сергеевич **Щербакова** СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званине—генерал-полковник званине парас.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн ĕçĕсене тăваканĕ Я. ЧАДАЕВ

Мускав, Кремль. 1943 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсене Суворов орденĕсемпе наградăлани

Çапăçу ĕçĕсене пĕлсе тата хастарлăн ертсе пынăшăн тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче тунă ăнăçусемшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çаксене наградăланă:

Пĕрремĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе Д. И. Батов генерал-лейтенанта, Н. П. Пухов генерал-лейтенанта, Н. Е. Романенко генерал-лейтенанта наградăланă.

Иккĕмĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе 22 çынна наградăланă.

Виççĕмĕш степеньлĕ Суворов орденĕпе 58 çынна наградăланă. (ТАСС).

В. М. Молотов юлташ Нидерландсен посолне барон К. Ван Брюгель Дуглас господина йышăнни

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Нидерландсен Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне барон К. Ван Брюгель Дуглас господина йышăннă, ăна çывăх вăхăтра вăл СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне хăйĕн верительнăй грамотисене парас май йышăннă.

ЧĂВАШ КОММУНИ — 187(6424) №, 1943 ç., сентябрь 19.

Шкула çÿремен пĕр ача та ан пултăр!

Республикăри шкулсен 1-мĕшне IV-мĕш классене вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа 19 кун иртрĕ. Çутĕç органĕсене пуринчен малтан шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренме çÿретни—всеобуч законне пурнăçа кĕртни тăрăх хаклаççĕ. 1-мĕшне IV-мĕш классене вĕренме тивĕçлĕ ачасем пурте шкула çÿреççĕ пулсан, вара çутĕç органĕсен руководителĕсем пирки хăйсене çапла калама пулать: вĕсем хăйсен çине илнĕ тивĕçе ăнăçлă тусса пыраççĕ, вĕсем ку ĕçе мĕнпур вăйĕсене хурса, шкул руководителĕсене тата общественноçа лайăх явăçтарнă.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренме çÿретмелли—сталинла закона пурнăçа кĕртес ĕçре нимĕнле сÿрĕклĕх те пулма тивĕçлĕ мар.

Республикăн всеобуч законне пурнăçласа тĕлĕшпе кăтартуллă ĕçлекен шкулсем сахал мар. Шупуçри пуçламăш шкул (заведующийĕ—Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учительници Яшмолкина юлташ), Элĕк районĕнчи Мăн Илăкăш тулли мар вăтам шкул (директорĕ Родикова юлташ), Çĕрпÿ районĕнчи Тонпере тулли мар вăтам шкул (директорĕ Альбатрос юлташ), Советски районĕнчи Чумăккассинчи тулли мар вăтам шкул (директорĕ Смородинова юлташ), Чкаловски районĕнчи Катекри тата Илăм Патăрьелĕнчи пуçламăш шкулсем всеобуч законне вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕсенчех тулли мар пурнăçа кĕртме тытăнчĕç.

Анчах хăшпĕр районсенче шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентме явăçтарас ĕç сÿрĕк пырать. Апла пулни те унти исполкомсемпе çутĕç пайĕсен заведующийĕсемпе шкул директорĕсене районри всеобуча пурнăçласа çитерме ĕçне лайăх йĕркелемен лăпланса ларасçĕ, вĕсене всеобуч законне пурнăçлас ĕçе яваçтарманни палăртать.

Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне Улатăр районĕнчи шкулсене 340 ача, Куславкка районĕнче—338 ача, Тăвай районĕнче—320 ача, Шăмăршă районĕнче—280 ача, Чкаловски районĕнче—273 ача, Вăрнар районĕнче—196 ача, Çĕмĕрле районĕнче—182 ача çÿремен.

Всеобуч законне пурнăçа кĕртес енĕпе Элĕк районĕнчи Илăш пуçламăш шкулĕ уйрăмах япăх ĕçлет. Унта вĕренÿ çулĕ пĕрремĕш кунĕнче 79 ача вĕренме пыман. Çавăн пекех Сĕнтĕр районĕнчи Муркаш вăтам шкулне 79 ача пыман т. ыт. те. Çаксене пулах пĕтĕм республика сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 6.520 ачана вĕренĕве явăçтарман.

Тăраса ĕçленĕ пулсан, çак ситменлĕхе çийĕнчех пĕтерме пулатчĕ. Анчах çутĕç органĕсем всеобуч законне пурнăçа кĕртессипе пыракан кĕрешĕве тивĕçлипе хутшăнмарĕç, всеобуч законне пурнăçа кĕрсе пынине кулленех тĕрĕслесе тăрайманçĕ, шкул директорĕсемпе учительсене государствăн çак пысăк ĕçне пурнăçласси çинчен ответлăха тытман.

Чăваш АССР Совнаркомĕ шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренме çÿретесси çинчен ятарласа постановлени йышăннă. РСФСР Совнаркомĕ шкул çулне çитнĕ ачасене шута илмелли инструкцие çирĕплетнĕ. Çак документсем çутĕç органĕсене республикăра пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн ... задачăсене кăларса тăратрĕç. Анчах вĕсене пурнăçа кĕртессипе ĕç кирлĕ пек кĕрешни çук-ха.

Шкул директорĕсемпе заведующийĕсене ĕçре вырăнĕсене часчасах шкул юсасси хатĕрлени, вутă хатĕрлесси тата ытти ĕçсем пăсаççĕ. Çав вăхăтрах çакăн пек всеобуч законне пурнăçа кĕртменни вĕсене касаççĕ. Ĕçсыши депутачĕсен хăшпĕр райсоветсен исполкомĕсем всеобуч законне пурнăçа кĕртессине, вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсене, тивĕçлипе хакламаççĕ.

Всеобучпа кĕрешес ĕçре Вăрнар, Шăхасан, Комсомольски районсен исполкомĕсем вăл ĕçе хăшпĕр çÿтĕсемех ирттерме тăрăшаççĕ. Анчах Тăвай районĕнче ку ĕç юсанас вырăнне сÿрĕкленсе пычĕ. Унта сентябрĕн 1-мĕшĕнче шкула 278 ача пыман пулсан, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вĕсем нумайрах пулчĕç. Куславкка районĕнче те ĕçсем чаплах мар.

Шкул çулне çитнĕ ачасене шута илес ĕç чылай районсенче начар пулса пырать.

Сентябрьпе октябрь уйăхĕсем—всеобуч законне тĕпĕ-йĕрĕпех пурнăçа кĕртмелли татăклă уйăхсем пулса тăраççĕ.

Чăваш республики халăха вĕрентес тĕлĕшпе Мари республикипе ăмăртса ĕçлеме пуçларĕ. Ăмăрту договорĕнчи обязательствăсем хушшинче всеобуч законне пурнăçа кĕртесси—тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Районсемпе хуласенчи партипе совет тата комсомол активне пĕр вăхăтлăха çак ĕçе мобилизацилес пулать. Фронтовикăн пĕр ачи те шкул тулашĕнче ан юлтăр. Ленинград хулинче тата Ленинград облаçĕнче всеобуч законне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме пултарнă, пирĕн, инçетри тылра ĕçлекенсен, çак законе пурнăçа кĕртме майсем татах та ытларах.

Халех, çакăнпа сивĕтсе пăрахаччен, шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтармалли мелсене йышăнас пулать: Пулăшу кирлĕ ачасене хăваттăрах пулăшас пулать. Анчах шкултан инçетре пурăнакан ачасене пурăнмалли вырăн тупса парас пулать.

Ку тĕлĕшпе Çĕрпÿ районĕнчи Лĕпсер ялсовечĕнчи колхозсемпе колхозниксем пахалăхлă ĕç пуçарчĕç. Вĕсем кĕске вăхăтра ачасене пурăнмалли çурт хатĕрлерĕç. Çав районти пирĕн ытти ялсенче те ăнăçлă ĕçлесе пырас пулать. Çапла тусан вара шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренме çÿретме, интернатсем уçса пама пулать.

Кашни шкулта вĕрентекенсен ачасене вĕрентсе çитересси çине вĕсене ĕçлеме ĕçе организацилес пулать.

Пирĕн тата ашшĕ-амăшĕсемсĕр тăрса юлнă ачасене пурне те тумлантарса, çутĕçпе ăсталантарас ĕçе вĕрентмелле. Вĕсене тытса тăмалли ача çурчĕсене ячĕсене тумлантарса, вĕсене пурне те шкула çÿретес пулать. Çавăн пирки тата ачасене шкул çумĕнче ача çурчĕсем уçас пулать, 15—20 ача валли çурт, вутă, апат-çимĕç тата воспитательсем тупма кашни районах условисем пур.

Ку тĕлĕшпе мухтава тивĕçлĕ ĕçсене палăртар. Шупашкар районĕнчи Çĕньялти тулли мар вăтам шкулĕн çумĕнче ачасен интерначĕ пур. Унта 46 ача. Ялсовет председателĕ Антонов, учительсем Шестакова тата ыттисем ачасене тивĕçлĕ пулăшу пачĕç. Колхозниксем интерната пулăшса тăраççĕ. Антонов юлташ ертсе пыракан ялсовет всеобуч законне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ.

Производстăлла предприятисенче те интернатсем уçма май пур. Шупашкар хулинчи 14-мĕш номерлĕ тулли мар вăтам шкулта 30 ача валли интернат организациленĕ. Мехлеспункт директорĕ А. Зверев юлташ тăрăшнипе, унта ачасене пурăнма кирлĕ пек условисем туса панă. Ишлей районĕнче те ача çурчĕсем çумĕнче пуçламăш шкулсем уçăлаççĕ. Çав районти ачасен лагерĕнче Херсонова райçутĕç пайĕн заведующийĕ Гагарин юлташсем ĕна ĕçне ситтиленсе тăвăс тесе шанма пулать.

Шкулсем кĕркелле ĕçлетме тесен, шкул вутти вăхăтра хатĕрлесе тăрас пулать. Шкулсене ытти материалсем тивĕçтермелле, çавăн тăрăх шкулсене вутă хатĕрлесе турттарас ĕç ачасене çанă тăрăх çитмест. Улатăр, Елчĕк, Тăвай, Çĕрпÿ районĕсенче çак плана тултармĕç.

Ку ĕçе халех вăйлатас пулать, учительсене пĕр тăраттарсси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

V-мĕшне X-мĕш классене вĕренÿ çулĕ пуçланачченех шутлă кунсем юлчĕç. Çак вăхăта ачасем кĕтсе илме хатĕрленме çеç памалла. 1-мĕшне IV-мĕш классене вĕренÿ çулĕ организацилене пурнăç илнине те, аслă классене вĕренме пуçланă ачасене те, учитель предметлĕ ачасене вĕренекенсене çук пирки, акăлла ача çÿретес пулать. Хăшпĕр районсенчи çутĕç органĕсемпе ачасене пуçтарассипе пĕлтерĕшлĕ ĕçсем тумалла.

РСФСР Совнаркомĕ 1943 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнче хăйсен специальноçĕсемпе ĕçлемен учительсене шкулсене çĕр ĕçлеме тавăрасси çинчен постановлени йышăннă. Çакна май Чăваш АССР Совнаркомĕ те ку енĕпе постановлени йышăнчĕ. Анчах çак постановленисене пурнăçа кĕртес ĕçре Наркомпросăн унăн районсенчи органĕсем умне пысăк чăрмавсем тухрĕç. Хăшпĕр руководительсем ку постановление пурнăçласшăн кĕрешсе вырăнне, хăйсене ăна пăсас çĕре тăраççĕ.

Октябрьски районри Тутпай Есмĕл шкулĕнчи В. Сорокина учитель государство шкулне ĕçлеме илесси çинчен отделен инспекторĕ пурне ĕçлеме çине илнĕ пулнă. Анчах райсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ Сорокина ĕçрен пырать. Çакăн пекех Наумов учитель те ĕçрен кăларнă. Тăвай райпотребсоюзĕ Г. Гаврилова учительницăна шкула ĕçлеме ямасăр тăрать.

Хăйсен специальноçĕсемпе ĕçлемен учительсене пурне те сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр Чăваш АССР Наркомпросĕн аллине памалла.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çутĕç фронтĕнче ĕçлекенсене çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ. Çак патриотла çĕкленĕве ÿстерсе пырса, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулне ăнăçлăн ирттерессишĕн вăйлăн кĕрешер!

М. МАКАРОВ.
Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ.

Çĕрулми кăлараççĕ

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри Бойков ячĕпе тăракан колхоз ĕнер çĕрулмине массăллăн кăларма тытăнчĕ.

Республика уйхирĕсенче

Чăваш республикинчи колхозсенче сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне ялхуçалăх ĕçĕсем мĕнле пулса пынине кăтартакан СВОДКА (процентпа)

Районсем	Кĕрхи тыра вырни	Аван çапни	Кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарни
Улатăр	94,1	49,0	—
Элĕк	73,7	42,4	8,2
Вăрнар	96,9	40,0	9,2
Йĕпреç	84,7	50,9	1,1
Ишлей	75,0	48,5	6,8
Калинино	80,8	39,0	5,4
Канаш	80,1	42,9	10,2
Куславкка	82,0	50,7	5,5
Комсомольски	97,9	41,9	9,5
Красноармейски	82,5	43,7	14,3
Хĕрлĕ Чутай	69,2	41,0	3,5
Кувакино	76,2	47,5	0,9
Сĕнтĕрвăрри	85,9	48,7	5,9
Октябрьски	67,1	45,7	10,1
Первомайски	71,6	39,0	0,4
Пăрачкав	85,9	33,6	—
Советски	86,1	43,8	4,1
Сĕнтĕр	93,8	50,7	10,0
Вăрмар	75,8	50,2	4,4
Çĕрпÿ	74,1	40,6	10,7
Шупашкар	8,8	48,9	8,5
Чкаловски	75,6	35,3	2,7
Шăмăршă	96,4	50,2	2,3
Шăхасан	72,6	35,6	3,6
Çĕмĕрле	89,1	55,9	3,8
Етĕрне	94,3	50,1	9,0
Елчĕк	83,8	43,0	12,7
Тăвай	43,7	23,2	8,5
Шупашкар хули	100	51,4	9,0
ЧАССР тăрăх	80,8	43,7	6,5
Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пулнă	63,6	34,5	3,6

21 колхоз государствăна тырă парса татнă

КАНАШ. Сентябрĕн 17-мĕшĕ. (Хамăр корр., телефонпа). Районри колхозсем, уяр çанталăкпа туллин усă курса, государствăна çак кунсенчех тырă парса татма тăрăшаççĕ. Район сентябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 64 процент тултарнă. 48 колхозран 21-шĕ 1943 çулшăн тырă памалли плана ытлашшипех тултарнă. Доронин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ И. Кузьмин юлташ), кăçалхи плана тултарса, 1944 çулшăн натуроплата шучĕпе 100 центнер тырă панă.

Н. ПЕТРОВА

Государствăна тырă парса татрĕç

КУКЕÇ. Çак кунсенче «Строитель», Сарбакассинчи «Урожай», «Зерно» колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Район сентябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 61 процент тултарнă. Натуроплата шучĕпе колхозсем 606 тонна тырă панă.

Кĕрхи çĕртме тума тытăнман та

КАЛИНИНО. Районри малта пыракан колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтереççĕ. Киров, Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас плана çурри ытла пурнăçланă ĕнтĕ. Çав вăхăтрах «Ким», Буденный ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи çĕртме тума тытăнман та-ха. Хăçан тытăнма шутлаççĕ-ши вĕсем çав ĕçе?

В. ЗАЙЦЕВ.

80-шар ĕçкунĕ тунă

СОВЕТСКОЕ. «Новый путь» колхозри Н. Ненюкина, И. Краснов тата А. Краснов пионерсем каникул вăхăтĕнче 70—80-шар ĕçкунĕ турĕç. Вĕсем тырă вырма пĕр кун сиктермесĕр тухса колхозниксемпе пĕр тан ĕçлерĕç. Çавăн пекех «Коммунар» колхозри пионерсемпе шкул ачисем те колхоза тимлĕн пулăшаççĕ. Н. Степанов, С. Огородников тата ытти пионерсем те çум çумланă, тырă вырнă, ака-суха тунă çĕрте хастарлăн ĕçлерĕç. Н. Леонтьев, Н. Волков пионерсем колхозра звеноводсем пулса ĕçлеççĕ.

Е. НИКИТИН.

Вĕренекен ачасем колхоза пулăшаççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.) Кармаминчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем колхоз уйхирĕнче хĕрсех ĕçлеççĕ. Вĕсем пур ĕçре те ваттисенчен кая юлмаççĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче çак шкулта вĕренекен ачасем 2.989 ĕç кунĕ тунă. Вăл шутран М. Тимофеева 131 ĕçкунĕ, Н. Сергеев 106 ĕçкунĕ тунă. Çавăн пекех ытти вĕренекен ачасем те 70—80 ĕçкунĕнчен кая туман.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, шкул ачисем тата лайăхрах ĕçлеме пикенчĕç. Ку ĕçре вĕсене М. Петрова, Квасскова, Иванова учительницăсем ертсе пыраççĕ. Кĕçĕн классенче вĕренекен ачасем виçĕ гектар çинчи пăрçана типтерлĕн пуçтарса кĕртрĕç.

Ф. М.

Фронт ыйтнине пурне те паратпăр

Тăшман тăван çĕршыв çине тапăнса килнĕ йывăр вăхăтра тутар хĕрарăмĕсем те. Пĕтĕм Союзри пур халăхсен хĕрарăмĕсем пекех, хăйсен арçынĕсене тăван çĕршыва хÿтĕлеме фронта ăсатрĕç. Алла пăшал тытса çапăçма пултаракан колхозниксем Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç.

Колхозра вăй улшăнчĕ. Анчах пирĕн «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз вăрçă кунĕсенче татах та вăйлăрах ĕçлеме пуçларĕ. Пĕтĕм хĕрарăмсем ĕçе пĕр пек кар тăчĕç. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсен пĕтĕм йывăрлăхне хĕрарăм йăлтах хăй çине илчĕ. Колхозăн хуçалăхĕ чакма мар, çак икĕ çул хушшинче татах та çирĕпленчĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа ĕне фермине выльăхсен хисепĕ 4 хут ÿсрĕ, сурăхсене эпир икĕ хут нумайрах усрама тытăнтăмăр. Пыл хурчĕсен çемьисем колхоз утарĕнче, вăрçăччен хипе танлаштарсан, халĕ виçĕ хут нумайрах. Сысна ферми организацилерĕмĕр. Чăх-чĕпсен ферми хуркăвакалпа пуянланчĕ. Выльăхсен йышĕ ÿссе пынă май çĕнĕрен витесем туса лартрăмăр. Нумаях пулмасть пирĕн колхозра сурăх фермин ĕçĕсемпе, пирĕн колхозницăсен паха ĕç опычĕпе паллашма районри пур колхозсенчен те представительсем пухăнса канашлу туса ирттерчĕç.

Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фронтĕнче пысăк çитĕнÿсем туса пыни пирĕн колхозниксемпе колхозницăсене чĕререн савăнтарать. Вată колхозниксем ĕçре вĕрентсе пынипе кăçал пирĕн колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса пырать. Государствăна тырă памалли обязательствăсене эпир сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртме сăмах панăччĕ. Хамăр сăмаха чыслăн пурнăçларăмăр. Государствăна 1943 çулшăн пур йышши тырăсене те парса татрăмăр. Аш-какай та парса татнă, халĕ 1944 çулшăн аш-какай пама тытăнтăмăр. Çавăн пекех сĕтçу памалли обязательствăна та пурнăçларăмăр, çăмпа тир-сăран та парса татрăмăр. Кĕрхи тырăсене кăçал пирĕн колхоз планран 20 процент чухлĕ ирттерсе акрĕ.

Государствăна парса татнă хыççăн юлнă çăмран колхозницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли халь алшишсемпе носкисем çыхаççĕ. Пирĕн колхозăн ĕçĕсем кашни колхозникпе колхозница тимлĕн ĕçленипе ăнăçлă пулса пыраççĕ. Коллективлă хуçалăхăн пуянлăхне ÿстерессишĕн, фронтпа тăван çĕршыва пысăк пулăшу парса тăрассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлетпĕр эпир. Çакăншăн пире фронтран çĕнтерÿпе таврăнакан тăвансем пысăккăн тав тăвĕç, мухтĕç.

Х. БУЛАТОВ,
Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз председателĕ.

Хавхаланса ĕçлеççĕ

КАНАШ. Доронин ячĕпе тăракан колхозăн çыннисем Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿ туса пыни çине ĕçпе ответлеççĕ. Кирек мĕнле çанталăк тăрсан та, вĕсем октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерсе уйхирти ĕçсене пĕтĕмĕшпех вĕçлесшĕн, государствăна тырă çак кунсенчех парса татасшăн.

Кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ хыççăн халĕ колхоз пĕтĕм вăйпа уйхиртен кĕлте кĕртсе капана хывать, авăн çапать. Молотилка кунне 16—18-шар сехет ĕçлет, 200 пăт ытла тырă çапса кăларать. Фронтран аманса таврăннă А. Васильев кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлет, ыттисене те васкатать.

Кĕлте турттаракансем те маттур ĕçлеççĕ. Вуниккĕн вĕсем, вуникĕ лашапа турттараççĕ. Кунне 6-шар хутлаççĕ, 10—15 гектар çинчи тырра итем çине кĕртеççĕ. Лашапа çеç турттарсан ку ĕç вăрăма кайма пултарнине шута илсе, итем ĕçĕнчен пушă колхозниксем кĕлтесене алăпа йăтса капана хывма тухнă. 1-мĕш бригадăри колхозниксем алăпа йăтса пĕр кун хушшинче 4,5 гектар çинчи кĕлтесене капана хыврĕç. Игнатьева, Миронова, Федорова колхозницăсем талăкра капан картине вуншар çĕмел йăтаççĕ. Колхозăн 6 бригади пĕрле пĕр кун хушшинче алăпа йăтсах 20 гектар тырра капана хывса лартрĕ.

Колхоз кăçал пăрça нумай акса ÿстерчĕ. Ăна акнă участокрах итем туса, лашасемпе аштарса çапрĕ.

И. МАКСИМОВ.

Вăрлăхлăх хăварнă клевера хăвăрт тата пĕр тăнаксăр пухса кĕртмелле

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире вăрлăхлăх хăварнă кураксем енĕпе çапла каланă: «Куракрсен вăрлăхĕ тăкăнса ан пĕттĕр тесе, вăрлăхлăх хăварнă клевера 5 кунран ытла мар вăхăтра пухса кĕртмелле». Анчах та çак постановленине республикăри хăшпĕр районсем тивĕçлипе пурнăçласа пымаççĕ-ха. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вăрлăхлăх хăварнă клевера республикăра 34,1 процент çеç пухса кĕртнĕ. Уйрăмăнах ку ĕçе Улатăр, Первомайски, Пăрачкав, Комсомольски, Чкаловски районсем начар туса пыраççĕ. Çавăн пекех Элĕк районĕ те вăрлăхлăх хăварнă клевера 6,7 процент çеç пухнă.

Асăннă районсем ку ĕçе иртнĕ çулта та вăраха хăварнăччĕ. Кăçал та çак ĕçе хăвăртлатма шутламаççĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче клевер ăнса пулнă. Тĕслĕхрен, Йĕпреç, Вăрнар, Улатăр районĕсенчи колхозсенче кашни гектартан сахалтан 1 центнер клевер вăрлăхĕ илме пулать. «Победа», «Комбайн» (Йĕпреç районĕ) колхозсенче гектартан 1,5 центнера çити пухма пулать. Анчах пухса кĕртес ĕçе вăраха ярсан, гектартан 0,5 центнер та пухма çук. Çавăнпа та вăрлăхлăх хăварнă клевера çак кунсенчех типтерлĕн пухса кĕртмелле.

Уяр çанталăкра клевер вăрлăхне пухса кĕртме питĕ аван. Йĕпе-сапаллă çанталăкра вăл лайăххăн шĕкĕлченмест, çапма та йывăр.

Кăçал клевер вăрлăхĕ нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене те кирлĕ пулать. Çавăнпа та вăрлăхлăх хăварнă клевера вăраха ямасăр, пысăк пахалăхпа пухса кĕртессишĕн тăрăшмалла.

Клевер вăрлăхĕ питĕ кирлине ăнланса илнĕ çĕрте ку ĕçе туса пĕтернĕ ĕнтĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра клевер вăрлăхне комбайнпа сортăн-сортăн пухса кĕртнĕ. Çак кунсенчех çапса пĕтереççĕ.

Вăрлăхлăх хăварнă клевера пухассине кая хăварни пулмалла мар. МТС директорĕсемпе колхоз руководителĕсен клевер вăрлăхне çапнă çĕрте МК—1100 молотилкăсемпе туллин усă курмалла, ку ĕçе кĕске вăхăтрах вĕçлемелле.

Агроном М. САРРЭ.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Аш-какайпа Сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС тата ССР Союзĕн Аш-какайпа Сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариачĕ, предприятисемпе хатĕрлев организацийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Çĕрпÿ районĕнчи хатĕрлев конторине виççĕмĕш преми памалла тунă.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсем союзниксен Салерно заливĕ районĕнчи укреплениисен центрне хирĕç контратакăсем тунă, союзниксен çарĕсем вĕсен пур контратакисене те сирсе янă.

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче ирхине 5-мĕш армин чаçĕсем çав районра тепĕр хут вăйлă наступлени пуçласа янă. Нимĕçсем каялла чакаççĕ. Тыткăна илнисем пур. Союзниксен çарĕсем тинĕсрен пулăшу илсе тăраççĕ. 5-мĕш армин чаçĕсем Агрополь[illegible] 12 мильăра ларакан Албанелля хулине çĕнĕрен йышăнса илнĕ.

8-мĕш армин чаçĕсем çитĕнÿсем тунă, вĕсем халь Агрополь[illegible] 20 миля кăнтăртарахра тăраççĕ. 8-мĕш армин хĕвелтухăçри çыран тăрăх куçса пыракан чаçĕсем Таранто районĕнчен куçса пыракан çарсемпе çĕрлешнĕ. Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çарĕсемпе çар объекчĕсене тапăннă. Нимĕçсем сывлăшра хирĕç тăман.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Трентора гитлеровецсене хирĕç 8000 итальянец салтакĕ çапăçать, вĕсем хăйсен казармисенче тĕреклене ларнă. Предприятисем пĕтĕмпе тенĕ пекех ĕçлеме чарăннă. По шывĕ хĕрринчи промышленноçлă хуласен рабочийĕсем нумайĕшĕ Итали çарĕн çапăланса пĕтнĕ чаçĕсем çумне хутшăнаççĕ, çав чаçсемпе пĕрле вĕсем нимĕçсем усă куракан çулсене пăсаççĕ.

Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Италири хăшпĕр районсенчи халăх нимĕçсене хирĕç тăма хатĕрленсе траншейăсем чавнă. Гитлеровецсем оккупациленĕ мĕнпур хуласенчи çынсене пурне те хваттерсенче тата урамсенче çаратаççĕ.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕсем Римри рабочи района çавăрса илнĕ. Çав районри халăх урамсенче баррикадăсем тунă тата çуртсене нимĕçсемпе çапăçма тĕреклетнĕ.

БАЛКАНРА НИМĔÇСЕМПЕ ИТАЛЬЯНЕЦСЕМ ПĔР-ПĔРИНПЕ ÇАПĂÇНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио çапла пĕлтерет: Далмацире (Югославия) нимĕç çарĕсемпе итальянец çарĕсем хушшинче хаяр çапăçу пырать.

Югославири партизансем Югославин вăтаçĕрти пайĕнчен Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи портсем патне каякан чугун çулсене татнă, çапла туса вĕсем нимĕçсене çапăçма кансĕрлеççĕ. Итальянецсен Тиранри тата Дураццори (Албания) гарнизонĕсем халĕ те нимĕçсене хирĕç тăраççĕ-ха.

Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Родос утравĕ çинче тата Афинăра итальянец чаçĕсемпе нимĕç чаçĕсем пĕр-пĕринпе виçĕ кун хушши çапăçнă. Родос утравĕ çинче итальянецсен войскисем парăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

Суворовла çар училищисене вĕренме илесси çинчен

Суворовла çар училищисен задачи—вăтам шкулсем панă чухлĕ пĕтĕмĕшле пĕлÿ парасси, çар çыннисен тата отечественнăй вăрçă партизанĕсен ывăлĕсене, çавăн пекех тата нимĕç оккупанчĕсем вĕлернĕ совет работникĕсемпе парти работникĕсен тата рабочисемпе колхозниксен ывăлĕсене вĕрентсе ÿстерсе çарта офицер пулса служить тума хатĕрлесси пулать.

Суворовла çар училищисен воспитанникĕсем, приготовительнăй классенче вĕренекеннисем те, училищĕсенчех пурăнаççĕ, вĕсем унта пĕтĕмпех государство шучĕпе пурăнаççĕ.

1943 çулта Воронежри суворовла çар училищин çак класĕсене вĕренме илеççĕ:

Старши приготовительнăй класа—9—10 çултисене, 1-мĕш класра вĕренсе тухнисене е 2-мĕш класра вĕреннисене;

1-мĕш класа—10—11 çултисене, 2-мĕш класран вĕренсе тухнисене;

2-мĕш класа—11—12 çултисене, 3-мĕш класран вĕренсе тухнисене;

3-мĕш класа—12—13 çултисене, 4-мĕш класран вĕренсе тухнисене;

4-мĕш класа—13 çултисене, 5-мĕш класран вĕренсе тухнисене.

Хăйĕн ачине Воронежри суворовла çар училищине вĕренме кĕртес текен ашшĕн е амăшĕн, е вĕсен вырăнĕнче тăракан çынсен, çавăн пекех тата ача çурчĕсен директорĕсен сентябрĕн 15-мĕшĕпе октябрĕн 5-мĕш хушшинче суворовла çар училищисене вĕренме яракан республикăри комиссин председательне заявлени памалла, заявленине Чăваш АССР Наркомпросĕ урлă çак адреспа ямалла: г. Чебоксары, ул. Чернышевского, д. № 5.

Заявленипе пĕрле обязательно çакăн пек документсем ямалла.

а) ача хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство;

б) миçе класс тата хăçан пĕтерни çинчен тата кашни предметпа мĕнле отметка илни çинчен Наркомпрос системинчи шкул е урăх тĕслĕ шкул çырса панă справка;

в) сывлăх мĕнли çинчен, ÿт-пĕвĕ тĕрĕс тĕкĕл çитĕнни çинчен тата чечче касни çинчен врачсен комиссийĕ çырса панă справка;

г) ашшĕ-амăшĕ мĕнле тата мĕнле ĕçре пурăнни çинчен вĕсен послужной списокĕнчен çырса илнĕ хут е çавăн çинчен райсовет (горсовет) çырса панă хут;

д) Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вилнĕ, е çухалнă, е инвалид пулнă ашшĕ-амăшĕ çинчен е ашшĕ-амăшĕн пуянлăхĕн ... условисене ... кăтартмалла.

Суворовла çар училищине вĕренме суйласа илнисене ...

РСФСР НАРКОМПРОСĔН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ПЕДАГОГИКА ИНСТИТУЧĔПЕ УЧИТЕЛЬСЕН ИНСТИТУЧĔ

1-мĕшпе старши курссене тата заочно вĕренме студентсем илесси çинчен пĕлтереççĕ. Çак факультетсене илеççĕ: 1) истори, 2) чĕлхепе литература (çак специальноçсемпе: а) вырăс чĕлхипе литература б) чăваш тата вырăс чĕлхисемпе литература), 3) физикăпа математика, 4) естествознанипе хими (çак специальноçсемпе: педагогика институтĕнче—естествознанипе хими, учительсен институтĕнче—естествознанипе географи).

Педагогика институтĕнче 4 çул вĕренмелле, учительсен институтĕнче—2 çул. Вĕренме кĕмелли условисем ытти аслă шкулсенчи пекех. Учительсен институтне вăтам шкулăн 9-мĕш класне вĕренсе пĕтернисенчен сахал пĕлекеннисене илмеççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем сентябрĕн 20—25-мĕшĕсенче пулаççĕ, экзаменсĕр илекенсене студентсен шутне сентябрĕн 1—5-мĕшĕсенче кĕртеççĕ, ыттисене сентябрĕн 25—29-мĕшĕсенче. Заочнăй йĕркепе вĕренес текенсене экзаменсăрах илеççĕ, унта вĕренес текенсен заявленийĕсене сентябрĕн 1-мĕшĕнчен илеççĕ. Заочнăй йĕркепе вĕренме çĕнĕрен илнисем валли сентябрĕн 1—10-мĕшĕсенче кăтартусем памалли сесси пулса иртет. Институтра вĕренÿ октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланать.

Институтăн пур студентсем валли те общежити пур. Çăкăр тата ытти продуктсене те рабочисемпе тан параççĕ. Институтăн хăйĕн хупă столовăй, подсобнăй хуçалăх пур. Института çĕнĕрен илнĕ студентсене, СССР Совнаркомĕн 1943 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнчи постановленийĕ тăрăх, вĕренÿ пуçланиччен 10 кун маларах ĕçрен хăтараççĕ, испытани тытакансене экзаменсем пуçланиччен 10 кун маларах отпуск параççĕ.

Вĕренме кĕмелли çинчен тĕплĕ справкăсем çыру ярса е хăйсем пырса институтра илме пултараççĕ. Унтах экзаменсен программи çинчен профессорсемпе преподавательсем консультаци параççĕ. Консультацие çыру ярса почтăпа ыйтса илме те юрать. Вĕренме кĕмелли условисем çинчен калакан справочниксем районсемпе вăтам шкулсенче пур.

Вĕренме кĕрес тесе панă заявленире факультет ятне тата мĕнле специальноçа суйласа илнине кăтартмалла. Заявленипе пĕрле çак документсене памалла: автобиографи, вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен калакан аттестат (е вăтам шкулăн 9 класне пĕтерни çинчен калакан справка), виçĕ фотокарточка, çар обязанноçĕ тĕлĕшĕнчен мĕнле тăнине, пĕлтерекен справка.

Института заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, директору Педагогического института.

ХĔРЛĔ ÇАР ÇУРТНЕ çакăн пек работниксем кирлĕ: художник, швейцар, уборщицăсем, рабочи-пожарник. 3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—89, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.